28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
7
ЫТЛАРИКУН
151(6902) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Тырă вырас тата государствăна тырă парас ĕçре пĕр куна та сая ямалла мар

Колхоз уйхирне хĕрӳллĕ ĕç вăхăчĕ çитрĕ—тырпул пухса кĕртес ĕç пуçланчĕ. Çакă вăл вырăнти партипе совет тата çĕрĕç органĕсене пĕтĕм ĕçе çав тери тимлĕн те оперативлăн ертсе пыма хушать.

Тырă вырса пухнă вăхăтра кашни сехет хаклă. Тырă вырса пухас ĕç—вăхăтра тумалли ĕç,—тет Сталин юлташ, — вăл кĕтсе тăма юратмасть. Вăхăтра вырса пухатăн—тырпуллă пулатăн, кая юлатăн — тырпулсăр юлатăн. Çулпуçăн çак аслă сăмахĕсене манма юрамасть. Анчах республикăра тырă вырас ĕçĕн малтанхи кунĕсем çакна кăтартса параççĕ: тырпула вăхăтра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тата çийĕнчех государствăна тырă парассине организацилес тĕлĕшпе чылай районри руководительсем ĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ-ха.

Кĕрхи тырăсем пур çĕрте те пулса çитрĕç. Хăшпĕр колхозсенче паян-ыранах вырма май килмен участоксем пур пулин те, вĕсем уйрăм участоксем кăна, тырпул, пĕтĕмĕшпе илсен, пулса çитнĕ. Халĕ ĕнтĕ суйласа вырасси çинчен мар, тырпула таккишĕпе вырасси çинчен калаçмалла. Анчах нумай районсенчи колхозсем тырă вырма тытăнман-ха. Августăн 6-мĕшĕ тĕлне Йĕпреç районĕнче пĕр колхоз та ыраш вырма тухман, Шупашкар районĕнче—4 колхоз, Иншей районĕнче—1 колхоз, Красноармейски районра—2 колхоз ыраш вырма тытăннă. Улатăр, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсем тырă вырма уйрăмах вăрахăн тытăнаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çирĕплетнĕ график тăрăх, халĕ государствăна тырă пама тытăнмалла; августăн 10-мĕшĕнче колхозсен кĕрхи тырăсем акма пуçламалла, анчах нумай колхозсенче вăрлăх çук—ыраш вырман. Тырă памалли график пурнăçа кĕрсе пымасть, кĕрхи тырăсем акма пуçламалли сроксем кая юлаççĕ. Тырă памалли графика тата кĕрхи тырăсем акмалли срока пăснишĕн Йĕпреç, Шупашкар, Иншей, Красноармейски, Улатăр, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсем хăйсен ответлăхне туяççĕ-ши?

Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем хăйсем тырă вырма кая юлса тытăннине «тырă симĕс-ха» тесе калаçнипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. ВКП(б) Иншей райкомĕн секретарĕ Пидутанов юлташ çав шухăш майлă тăрать. Вăл çапла калать: «Колхозсенче тырпул симĕс теççĕ, нимĕн те тума пултараймастпăр». Иншей районĕнче «МОПР» колхоз тырă вырма тытăннă. Кунта тырăсем симĕс тесе тăмаççĕ, анчах кӳршĕри «Новая жизнь», Молотов тата Водопьянов ячĕсемпе тăракан колхозсен председателĕсем вара ыраш тăкăнма пуçлас вăхăта кĕтеççĕ пулмалла.

Парти райкомĕ те, райисполком та, районри çĕрĕç пайĕ те çавăн пек колхоз председателĕсем тĕлĕшпе нимĕнле мера та йышăнман-ха. Кунта пĕтĕм ĕç хăй юхăмĕпе пулса пырасçа шанаççĕ, колхозсене ĕçлĕн те оперативлăн ертсе пыни çук.

Улатăр, Кувакино, Шупашкар тата ытти хăшпĕр районсен руководителĕсем тырă симĕс тесе калаçмаççĕ, анчах... вĕсене çумăр чăрмантарать иккен. Чăн та, кăçал çанталăк начар. Çумăрсем малашне те пулма пултараççĕ. Анчах 1943 çулта та çанталăк япăх тăчĕ, ун чухнехи опыт çакна кăтартса пачĕ: çумăрсем ун чухне тырпул пухса кĕртме начар хатĕрленнĕ колхоз председателĕсемпе районсен руководителĕсене çеç ытларах чăрмантарчĕç. Çавăн пек руководительсем япăх çанталăк пирки тухса тăракан йывăрлăхсене çĕнтерме тăрăшса мар, йывăрлăхсем çинчен калаçса ытларах вăхăта сая яраççĕ. 1943 çулта, вăрçăпа сыхăннă çав тери пысăк йывăрлăхсене тата çанталăк питĕ начар тăнине пăхмасăрах, республикăри колхозниксемпе колхозницăсем вăя хĕрхенмесĕр ĕçлерĕç те тырпула вăхăтра пухса кĕртрĕç, ăна пăсăлса пĕтме памарĕç. Кăçал эпир тырпула начар çанталăкра та пухса кĕртес ĕçе организацилеме пултараймастпăр-и вара?

Çанталăк начар тесе калаçни, тырă симĕс тесе калаçни пекех, вырăнсăр та сиенлĕ. **Халĕ ĕнтĕ пĕтĕмпех ĕçе организацилеме пĕлнинчен, вăхăтпа усă курма пĕлнинчен килет.** Пирĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле, лайăх çанталăкăн кашни сехечĕпе усă курса юлмалла. Çумăр çунă вăхăтра та вырмалла, çийĕнчех типĕтсе çĕмел тумалла. Кашни колхозрах кĕлте типĕтме — авăн вучахĕсем, кашни бригадăрах кирек мĕнле çанталăкра та арăн çапма — витнĕ итемсем пулмалла. Кашни колхоз авăнсемпе витнĕ итемсем тума пултарать, мĕншĕн тесен вĕсене тума ĕç вăйĕпе материалсем нумай кирлĕ мар, хăйсем вĕсем колхозсене тырă вырса пухас тата государствăна тырă парас ĕçсене ăнăçлăн туса ирттерме çав тери пысăк пулăшу пама пултараççĕ.

Ялхуçалăхĕнче чи ответлă тапхăр çитрĕ. Тырпула вăхăтра та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртмелле, государствăна тырă памалла, кĕрхи тырăсене акса хăвармалла,—çак ĕçсене пурне те, нимĕнле çанталăка пăхмасăрах, вăхăтра туса ирттермелле. Тырпул пухса кĕртессипе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси—пĕтĕм халăх ĕçĕ.

Партипе правительство тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме тата государствăна тырă парас ĕçе уборкăн малтанхи кунĕсенченех тытăнма хушаççĕ. Партипе правительствăн çак кăтартăвĕсене пирĕн пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле. Тырă вырас, государствăна тырă парас ĕçсене тăсса, чăрмантарса пыракан колхоз руководителĕсене çирĕп ответ тыттармалла. Партипе комсомол организацийĕсен, вырăнти советсемпе çĕрĕç органĕсен задачи—**колхозлă ялăн мĕнпур вăйĕсене тырпула ăнăçлăн пухса кĕртес тата государствăна тырă срокчен парса татас ĕçе мобилизацилесси пулса тăрать.**

Çĕнтерӳ тырпулне пухса кĕртес вăхăт килсе çитрĕ

Кашни сехетпе туллин усă курса, тырпула хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр вырса пуçтарар!

ЫРАШ ВЫРМА ТЫТĂНЧĔÇ

ЧУРАЧĂК, августăн 6-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районти 11 колхозра ыраш вырма тытăннă. Паянхи кун тĕлне районĕпе 113 гектар ыраш вырнă. Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра пĕр кун хушшинче 30 гектар ытла ыраша суйласа вырнă. «Гигант» колхозра уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ, колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Кунта 32 гектар, «Ударник» колхозра 15 гектар, «Мотор» колхозра 8 гектар, «Герой» колхозра 5 гектар ыраш вырнă. Çак колхозсенче пуринче те столовăйсем уçнă. Ыраш пур тĕлте те пĕр тикĕс пиçсе çитменни машинăсемпе усă курма май памасть.

Уйрăм колхозсенче вара суйласа вырма май пур çĕртех: ыраш симĕс-ха,—тесе ĕçе тытăнмаççĕ. «Труд» колхозăн (председателĕ Герасимов юлташ) пулса çитнĕ лаптăксем нумай, анчах та кунта ыраш вырма тытăнман. Тырă пулса çитнĕ, вырмалла, председатель Герасимов ĕçкĕрен пуçăнайманни кăна чарса тăрать,—тесе кӳренеççĕ колхозниксем. «Новая сила» колхозра та 3-мĕш бригадăн хирĕнче ыраш пĕтĕмпех пулса çитнĕ. Колхоз председателĕ Кириллова юлташ ĕçе кирлĕ пек организацилемен-ха.

Халĕ кашни колхозрах пухусем пулса иртеççĕ. Унта Воронеж облаçĕнчи Ильич ячĕпе тăракан колхоз членĕсем чĕнсе каланине сӳтсе-яваççĕ тата виçĕ аслă державă руководителĕсен Берлинри конференцийĕн решенийĕсемпе паллашаççĕ. Çак ытла та паха документсемпе кашни колхозникех паллаштарни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, районра 5 ялта (кустра) агитаторсен канашлăвĕсене ирттернĕ. Колхозниксем тырпул пухса кĕртес ĕçе ăнăçлă ирттерес тесе социализмлă ăмăртăва хутшăнса конкретнăй обязательствăсем илеççĕ.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Столовăй уçаççĕ

Тырпул пухса кĕртес ĕçе йĕркеллĕ ирттерес тесе, Иншей районĕнчи Шĕнер Тăрăнти «Новая жизнь» колхоз членĕсем столовăй уçма йышăнчĕç. Столовăй валли кирлĕ продуктсемпе савăт-сапасем пĕтĕмпех хатĕрленĕ, унта ĕçлеме сынсем те уйăрса хунă.

Столовăй тырă вырма тухсанах ĕçлеме тытăнать.

М. ГАЛКИНА,
Колхоз бригадирĕ.

Тырă вырнă чухне эпир ĕçе мĕнле организацилетпĕр

Вăрнар районĕнчи Уравăшри «Майăн 1-мĕшĕ» колхозăн уйхирĕсенче кăçал пуян тырпул ӳссе çитĕнчĕ. Уйрăмах сурттыррисем калама çук вăйлă. Вĕсем ырашпа пĕр танах, тинĕс пек хумханса лараççĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес тапхăр Уравăш колхозникĕсемшĕн ăнсăртран килсе тухмарĕ. Кунти колхозниксем тырпула пухса кĕртме пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ, мĕнпур вак-тĕвексене те шута илнĕ. Çак кунсенче колхоза государство комиссийĕ тĕрĕслени çавна аван кăтартса пачĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление сӳтсе-явнă хыççăн тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕсене туса çирĕплетнĕ. Халĕ кашни колхозник ăçта, мĕнпе, мĕн чухлĕ ĕçлемеллине, вăл ĕçшĕн мĕн чухлĕ ĕçкунĕ панине лайăх пĕлет.

Кунта кăçал ырашпа кĕрхи тулă пĕрле 238,5 гектар, çуртырисем 255,89 гектар пухса кĕртмелле. Уйрăм сдельщина йĕркипе ĕçлесе, кĕрхи тырăсене 4 ĕç кунĕнче, çуртырисене 8 ĕç кунĕнче вырса пĕтерме палăртнă. Колхозри 3 жнейкăпа 4 ĕç кунĕнче кĕрхи тырăсем 60 гектар, комбайнпа 40 гектар, çурласемпе тата çавасемпе 138 гектар вырмалла.

Çурлапа çулакансене 4 кунлăха уйрăм участоксем çирĕплетсе панă. Ăна çапла тунă: кашни çынăн тырă лайăх вырăнта 0,80 гектар, вăтам çĕрте 1,00 гектар, начартарах çĕрте 1,20 гектар çулмалла. Уншăн вĕсем 11,6 ĕçкунĕ илеççĕ. Жнейкăпа тата комбайнпа выракансем мĕн чухлĕ ĕçкунĕ илмеллине те кăтартса панă. Колхозник е комбайнер лаптăка срокченех вырса пĕтерсе хăйĕн нормине ирттерсе тултарсан, ирттерсе тултарнă пайĕшĕн ĕçкунĕ икĕ хут ӳстерсе тӳлеççĕ. Срокра тултараймасан, вăл ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсен хисепĕнчен тултарайман пайĕ çине тивекен ĕçкунĕ чухлĕ катса илеççĕ.

Сурхи тырăсене 3 жнейкăпа 8 ĕçкунĕ хушшинче 120 гектар, комбайнпа 80 гектар, алăпа 55,89 гектар вырмалла. Колхозниксене 8 кунлăха уйрăм участоксем çирĕплетсе параççĕ. Суртырисем пĕр пек тикĕс мар пирки алăпа выракансене пурне те пĕр пек участоксем—кашнине 1,04 гектар çирĕплетсе параççĕ. Уншăн 17,68 ĕçкунĕ тӳлеççĕ. Ирттерсе тултарнăшăн е тултарайманшăн ĕçкунĕ çӳлте каланă пек тӳлеççĕ.

Тырпула пухса кĕртнĕ вăхăтра хăйсен вырăнĕнче колхоз председателĕ, счетовод, фермăсен заведующийĕ тата ытти хăшпĕр работниксем çеç юлаççĕ. Ыттисем пурте ĕçе тухаççĕ. Çапла, тырпул пухса кĕртес ĕçе мĕнпурĕ 112 колхозник, 88 подросток, выльăх-чĕрлĕх работникĕсем 8 çын тата ĕç выльăхĕсенчен 59 лаша хутшăнаççĕ. Çав вăхăтра ĕçе вĕрентнĕ 5 вăкăр хуçалăх ĕçĕсенче юлаççĕ.

Тырă вырма тухнă хыççăн 5-мĕш кунĕнче авăн çапма тытăнаççĕ, кĕлтесене капана хывма пуçлаççĕ, августăн 10-мĕшĕнче ыраш акма тытăнаççĕ.

Жнейкăсем хыççăн кĕлте сыхма, комбайн хыççăн тырă турттарма, улăм пухса пыма тата пучахсем пухма çынсем уйăрса хунă.

Государствăна тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парассине колхоз чи малтанхи ĕç тесе шутлать. Утта кунта июлĕн 13-мĕшĕнчех парса татнă, планпа 62,4 центнер парас вырăнне 66,93 центнер панă.

Колхозăн государствăна тырă парас ĕçе организацилес тĕлĕшпе лайăх опыт пур. Кăçал та ĕçе çав опыт тăрăх организацилеççĕ. Тырă вырма тухнă хыççăн 6-мĕш кунĕнче, пĕр кун хушши авăн çапнă хыççăн, государствăна тырă парас ĕç пуçланать. Государствăна тырă леçме ятарласа 8 çынтан транспортнăй бригада организациленĕ. Бригадăна Мария Орлова ертсе пырать. Çак бригада вара 21 кун хушшинче 1260 центнер тырă леçет, юлашки кунне 6 лавпа 35 центнер леçеççĕ. Çапла 36 кун хушшинче, октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне, колхоз государствăна тырă парса татать. Кашни икĕ лав пуçне 30 михĕ хатĕрлесе хунă. Вĕсем пĕрре кайса каялла килнĕ çĕре тепĕр çынсем михĕсене тырă тултарса хураççĕ. Çапла вара, транспортнăй бригада пĕр чарăнусăр тата куллен ĕçлет, кунне икшер хутлать.

Транспортнăй бригада членĕсене пĕрре хутлама 1,25 ĕçкунĕ параççĕ. Иккĕ хутланăшăн 2,50-шер ĕçкунĕ илеççĕ. Транспортнăй бригадăн бригадирĕ вĕсенчен 10 процент ытларах илет.

Бригадăн лашисем 5 кун ĕçленĕ хыççăн 6-мĕш кунĕнче канаççĕ, çав вăхăтра вара бригадăн çав членĕсемех урăх лашасемпе леçеççĕ.

Çакăн пек организацилеме шутлать тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçе «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз.

Е. ВОЛКОВ.
Вăрнар районĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ХУСАН ЧУГУН ÇУЛĔН УЙРĂМАХ ПАЛĂРНĂ РАБОТНИКĔСЕНЕ ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ[Н] ХИСЕПЛĔ ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Комму[ни]» 150-мĕш номерĕнче.

22. Николай Кириллович Кириллова—Канашри вагонсем юсакан заводри до[л]бежника.
23. Михаил Степанович Клячкина—Çĕмĕрле станцийĕнчи дежурнăя.
24. Николай Николаевич Князева—Канашри вагонсем юсакан заводри механически цех начальникне.
25. Фрол Сергеевич Крутова — Ки[р] станцийĕнчи старши стрелочника.
26. Алексей Иванович Кузнецова — Канаш станцийĕнчи парти бюровĕн секретарьне.
27. Петр Степанович Куляскина — çулăн 14-мĕш дистанцийĕнчи старши çулйĕр мастерне.
28. Яков Львович Львова — Чурачă[к] районĕнчи Еншик Чуллă ял Совет исполкомĕн председательне.
29. Сергей Максимович Максимова — Тĕрлемес станцийĕнчи вагонсем пăхака[н] осмотрщика.
30. Николай Матвеевич Матвеева — Тĕрлемес станцийĕнчи старши стрелочника.
31. Георгий Васильевич Медведĕва — Вăрнар станцийĕнчи дежурнăя.
32. Андрей Алексеевич Митрофанова—çулăн 5-мĕш дистанцийĕн 5-мĕш околоткĕнчи дежурнăй мастера.
33. Георгий Митрофанович Митрофанова—ВКП(б) Чурачăк райкомĕн иккĕмĕш секретарьне.
34. Николай Захарович Морозова—Куславкка районĕнчи «Правда» колхоз председательне.
35. Василий Яковлевич Никонова—Канашри вагонсем юсакан заводри ТЭ[Ц] машинистне.
36. Дмитрий Кириллович Орлова—Чашлама разъезд начальникне.
37. Алексей Васильевич Осовина—движени службин 3-мĕш отделени начальникне.
38. Анна Павловна Павловăна—Çĕрп[ӳ] станцийĕнчи дежурнăя.
39. Илья Петрович Петрова—движени службин 3-мĕш отделенийĕнчи старши стрелочника.
40. Дмитрий Петрович Плешивцева — Вăрнар станцийĕнчи грузчиксен бригадирне.
41. Владимир Степанович Погорелова—Улатăрти паровозсем юсакан заводри токаре.

(Малалли пулать).

ВИÇĔ ДЕРЖАВĂН БЕРЛИНРИ КОНФЕРЕНЦИЙĔН РЕШЕНИЙĔ—ПИРĔН АСЛА ÇĔНТЕРĔВЕ ÇИРĔПЛЕТЕКЕН ДОКУМЕНТ

Берлинри конференци решенийĕсене радио тăрăх илтсенех, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ял[а] орденлĕ заводра пур цехсенче те митингсем пулса иртрĕç.

Каневский юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри рабочисем митингра пурт пĕр кăмăллă пулса, август уйăхĕнчи производство планне срокчен тултарм[а] обязательство илчĕç.

Эрушпе юлташ начальник пулса ĕçлекен цехра митинг уйрăмăнах пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Цехри чи паллă стахановка Шаркова юлташ митингра çапла каларĕ:

— Берлинри конференци решенийĕсем вăрçăри аслă Çĕнтерĕве çирĕплетсе хăваракан чаплă документ пулса тăраççĕ. Халĕ çĕршывра пур çĕрте те социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Эпир, рабочисем, хамăрăн ĕçри хастарлăха темиçе хут ӳстерсе, ăмăртура мала тухассишĕ[н] кĕрешетпĕр. Эпĕ кулленхи ĕç нормине 280 процент тултарма сăмах паратăп. Хампа ăмăртса ĕçлеме Чеурина стахановкăна чĕнетĕп.

Çавăн пекех митингра Зайцева, Киселева, Прокурнова тата ытти рабочисем те тухса каларĕç, вĕсем кашниех куллен[х]и ĕç нормине 250 процентран кая ма[р] тултарса пыма пулчĕç.

Цех коллективĕ август уйăхĕнчи заданине августăн 29-мĕшĕ тĕлне пурнăçлам[а] обязательство илчĕ.

Н. ВОЛКОВ,
Заводри партбюро секретарĕ[н] заместителĕ.

ВĂРНАР СТАНЦИЙĔНЧЕ

ВĂРНАР, августăн 4-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Вăрнар станцийĕнче ĕçлекенсем железнодорожниксен кунне хăйсен ĕçне лайăхлатнипе кĕтсе илчĕç. Вĕсем станци çуртне, тавар кантурне, буфета тата будкăсене юсаса шуратнă. Хĕлле ĕçлеме кирлĕ ĕçхатĕрĕсене çителĕклĕ хатĕрленĕ. Çак кунсенче станцире ĕçлекенсем çул çинче ĕçлекенсене пулăшма тухрĕç. Вĕсем пурĕ пĕрле 730 сехет ĕçлесе, 200 метр тăршшĕ чугун çула хăпартса тӳрлетрĕç. Унсăр пуçне станцири çулсене пĕтĕмпе[х] тасатнă. Ку ĕçе районри служащисем те хутшăннă.

Станци дежурнăйĕсем Е. Медведевпа Ф. Морозов, стрелочниксем Поповпа Томанин юлташсем яланах пĕр браксăр ĕçлеççĕ. Грузчик Плешивцев нормăна 150—200 процент тултарать.

И. В. Сталинпа В. М. Молотов Мускава таврăнни

Августăн 5-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ Генералиссимус И. В. Сталин тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Берлинран Мускава таврăннă. (ТАСС).

Польша правительстви янă салам

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Генералиссимуса СТАЛИНА

Польша халăхĕн историйри чи пысăк çитĕнĕвне—унăн хĕвеланăç чиккисем чăнахах та Одер шывĕпе Хĕвеланăç Нейсе шывĕ çинче пулнине йышăннине, çакă вăл Польша халăхĕн чăн-чăн никама пăхăнманлăхĕ вăйланса каясси никĕсĕ пулнине палăртса уявланипе пĕрлех, эпир Польшăна ирĕке кăларнă паттăр Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳллĕ маршалĕсене—Жуков маршала, Рокоссовский маршала, Конев маршала чысласа, Сире, Генералиссимуса, ирсĕр фашизмла Германи агрессине çав тери чаплăн çĕнтерме пĕрлешнĕ демократиллĕ нацисене организацилесе, хавасланарса пынăскере, чун-чĕререн хĕрӳллĕ салам яратпăр, ирĕке кăларнă Польша халăхĕ аслă совет халăхне тăрăнăн юратса унпала питĕ туслăн пурăнассине шантаратпăр.

БЕРУТ, МОРАВСКИЙ, ЖИМЕРСКИЙ.

СОЮЗНИКСЕН ФИНЛЯНДИРИ КОНТРОЛЬ КОМИССИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

Германие хирĕç пынă вăрçă ĕçĕсем пĕтнĕ май пĕтĕмĕшле лару-тăру улшăннине шута илсе, Союзниксен Финляндири контроль комиссийĕ перемири çинчен тунă килĕшӳре кăтартса панă перемири режимĕн хăшпĕр условийĕсене çăмăллатас енĕпе пăхса тухма май пур тесе шутланă.

Çапла вара июль уйăхĕн вĕçĕнче Союзниксен контроль комиссийĕ Финляндин çар тата суту-илӳ суднисем куçса çӳрес тĕлĕшпе тунă чăрмавсене пĕтернĕ. Çавăн пекех тата Союзниксен контроль комиссийĕ Финлянди самолечĕсем Финлянди çĕршывĕнче вĕçсе çӳрес тĕлĕшпе тунă чăрмавсене те пĕтернĕ. Çапла ĕнтĕ Финляндин çар тата суту-илӳ суднисем ирĕклĕн куçса çӳреме, çавăн пекех Финлянди самолечĕсем те Финлянди çĕршывĕнче пĕр чăрмавсăр вĕçсе çӳреме пултараççĕ. Союзниксен контроль комиссийĕ Котка тата Турку хулисенчи ку таранччен Союзниксен (Совет) Главнокомандованийĕн аллинче тăнă аэродромсене Финлянди командованийĕн аллине пама йышăннă.

Тата кунсăр пуçне Союзниксен контроль комиссийĕ Пĕрлешнĕ Нацисемпе нейтральнăй çĕршывсен представителĕсем валли Финляндире телеграф, почта тата телефон çыхăнăвĕ уçма ирĕк панă.

Чайнăйсемпе кĕрсе выртмалли çуртсен хисепне ӳстереççĕ

Центросоюз президиумĕ потребитель кооперацийĕн организацийĕсене аслă çулсем çинче халăха йышăнса пăхас ĕçе тĕпренех лайăхлатма хушнă. Кăçалхи çул пĕтмĕ тĕлне РСФСР территорийĕнчи чайнăйсен хисепĕ 4.000 çитмелле, вĕсенчен 2.400-шĕ чайнăйсемпе кĕрсе выртмалли çуртсем пулмалла. Чайнăйсем пуринчен ытла Мускав, Киров, Горький, Калинин, Новосибирск, Воронеж тата ытти облаçсенче те пулаççĕ. Паллă çулсем çинче кашни 25—30 километр хушшинче пĕрер чайнăй пулмалла.

Потребитель кооперацине хушнă тăрăх, пур чайнăйсемпе кĕрсе выртмалли çуртсенче те чĕй, кофе, вĕретнĕ шыв, закуçкăсем сутма хушнă. Кĕрсе выртмалли çуртсенче, кунсăр пуçне, урапа тикĕчĕ, пĕкĕсем, туртасем тата ытти те сутма хушнă. Чайнăйсемпе кĕрсе выртмалли çуртсем талăкĕ-талăкĕпех ĕçлемелле. (ТАСС).

Государствăн тырпул хатĕрлемелли 1945 çулхи планне срокчен тултаратпăр, государствăна 64 миллион пăт тырă паратпăр, кĕракине вăхăтра та лайăх ирттеретпĕр!

Краснодар крайĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсемпе МТС-ри рабочисемпе работницăсем, ялхуçалăх специалисчĕсем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, комбайнерсемпе тракторисчĕсене, совхозсемпе МТС-сен тата мĕнпур социализмлă çĕрĕçĕн работникĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Эпир, совет çыннисем, телейлĕ те савăнăçлă вăхăтра пурăнатпăр! Ленин—Сталин партийĕ шанчăклăн ертсе пынипе, гениллĕ аслă çулпуç тата аслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, совет халăхĕ, унăн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ тискер те ултавлă тăшмана—фашистла Германие çапса аркатрĕç.

Пирĕн юратнă çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне, вĕçĕ-хĕррисĕр Совет çĕрĕнче пурăнакан мĕнпур халăхсен политикăпа хуçалăх тата культурăллă пурнăçĕ малалла аталанас тапхăра кĕчĕ.

Мĕнпур совет халăхĕпе пĕрлех Кубань тăрăхĕнчи колхоз казакĕсем те вăя хĕрхенмеççĕ, хавхаланса ĕçлеççĕ. Мĕнпур совет çыннисен ашшĕпе тусĕ Иосиф Виссарионович Сталин вăрçă хыççăн юлнă суранăсене хăвăртрах тӳрлетсе çитерме чĕнни пирĕн пĕтĕм ĕçĕн ялавĕ пулса тăрать.

Пирĕн, Кубань çинчи колхозниксемпе колхозницăсен, совхозсемпе МТС работникĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен, халĕ пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт кăна: хамăрăн пуян края çĕнĕрен чĕртсе ура çине тăратмалла, Кубане çĕнĕрен чечекленекен край туса хумалла, вăл Тăван çĕршыв валли паха тулă тата ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем ытлăн-çитлĕн парса тăтăр.

Эпир халĕ хамăрăн пĕтĕм ĕçе çав ĕмĕте пăхăнтарнă. Сураки вăхăтĕнчех, пирĕн Кубаньри Хĕрлĕ партизансен ячĕпе тăракан колхоз чĕннипе çĕршывра вăйлă тырпулшăн социализмлă ăмăрту сарăлса кайсан, эпир мĕнле те пулин ытларах та лайăхрах акса хăварас тесе вăя хĕрхенмесĕр ĕçлерĕмĕр. Суртырисене акса пĕтерсен, эпир тырпула юратса та тимлĕн пăхса çитĕнтерме тытăнтăмăр. Колхозниксемпе колхозницăсен, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисемпе работницăсен тӳрĕ кăмăллă ĕçĕ пире пысăк çимĕçсем кӳчĕ.

Кубань уйхирĕсенче Çĕнтерӳ çулне тивĕçлĕ чаплă тырпул ӳссе çитĕнчĕ. Вăйлă тырпулшăн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пуçарса яракансем—Хĕрлĕ партизансен ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем—кашни гектартан вăтам шутпа 126 пăт тĕштырă, вырăнĕ-вырăнĕпе вара 200-шер пăт тĕнтырă илчĕç. Выселковски, Гражданск, Кореновски, Ново-Титаровски тата ытти районсенчи колхозсем хăйсен уйхирĕсенче гектартан 100-шер пăт тырă туса илчĕç.

Халĕ Кубань çинче хĕрӳллĕ ĕç вăхăчĕ. Çĕршер колхозпа вуншар совхоз тырă вырса пĕтерчĕç. Çак ĕçе Кубань çинчи чи пысăк районсенчен пĕри—Выселковски район туса пĕтерчĕ, ку районри колхозсем 26.367 гектар çинчи тĕштырра вырса пухрĕç. Кореновски районри колхозсем те тырпула кĕçех вырса пĕтереççĕ. Кубань çинче тырпул пухса кĕртес ĕç часах вĕçленет, анчах эпир çакна лайăх ăнланатпăр: тырпула вырнипех ĕç пĕтмест-ха. Пирĕн тĕп задача—хамăрăн пĕрремĕш тивĕçе пурнăçа кĕртесси—государствăна тырă срокчен парса татасси пулса тăрать.

Кăçалхи çул Кубань çĕршыва 64 миллион пăт тырă парать. Çак ответлă та хисеплĕ задачăна эпир чыслăн пурнăçлатпăр. Çакăн шанчăкĕ вăл—эпир çĕнĕ тырпула Тăван çĕршыв аллине хăвăртрах, срокчен парса татма хĕрӳллĕн ĕмĕтленни пулса тăрать.

Кубань çинчи колхозсемпе совхозсем тырпул хатĕрлес тĕлĕшпе государство панă июль уйăхĕнчи задание ирттерсе тултарчĕç. Брюховецки районри Хĕрлĕ партизансен ячĕпе тăракан колхоз, государствăна Кубань çинчи чи лайăх сортлă тырра 60.000 пăт парса, хăйĕн пĕрремĕш таса тивĕçне пурнăçа кĕртрĕ.

Кубань çинче çĕр ĕçлесе пурăнакан хресченсен ĕç тухăçлăхĕ çав тери пысăк. Павловски МТС-ри Александр Иванович Заплюйко комбайнер «Сталинец» комбайнпа 14 ĕç кунĕнче 609 гектар тырă вырса пуçтарчĕ, Куйбышев МТС-ĕнчи Григорий Иванович Вовк комбайнер «Коммунар» комбайнпа 14 ĕç кунĕнче 400 гектар вырса пуçтарчĕ. Килес çулхи вăйлă тырпул никĕсне лайăх хывса хăварас тесе, крайри колхозсемпе совхозсем кĕрхи тырăсене агротехника кăтартнă чи лайăх сроксенче акса хăварма шутларĕç. Эпир 1946 çул валли кăçалхи кĕркунне кĕрхи тырăсем пĕлтĕрхинчен ытларах акса хăварма ĕмĕтленетпĕр. Çакă вăл Кубань çинчи тĕп культурăна — кĕрхи тулла акса тăвас ĕçе вăрçăччинхи пекех йĕркелесе яни пулать.

Пирĕн крайри колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче государствăпа тырă срокчен парса татассишĕн, кĕрхи тырăсене вăхăтра акса хăварассишĕн социализмлă ăмăрту вăйлăран вăйлă сарăлса пырать.

Эпир сире государствăн тырпул хатĕрлемелли планне срокчен тултарассишĕн, кĕракине агротехника кăтартнă чи лайăх сроксенче тата питĕ паха туса ирттерессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнетпĕр.

Эпир çакăн пек обязательство илетпĕр:

1. Государствăн тырпул хатĕрлемелли планне кашни колхозпа совхозăн пĕтĕмĕшпех тата срокчен, 1945 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕччен, тултармалла.

2. Кĕрхи культурăсене чи лайăх вăрлăхсемпе, агротехника кăтартнă чи лайăх сроксенче, 20—25 ĕç кунĕнчен кая хăвармасăр акса пĕтермелле.

Юлташсем—колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсемпе МТС-сен работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем, государствăна тĕштырă парас тĕлĕшпе колхозсен пĕрремĕш тивĕçне срокчен пурнăçа кĕртес тесе, çакăнпа пĕрлех кĕрхи тырăсене кăтартуллăн акса хăварас тесе, çапла вара 1946 çулхи вăйлă тырпулăн çирĕп никĕсне хывса хăварас тата хамăрăн социализмлă государствăн çарпа экономика хăватне татах та ытларах тĕреклетес тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!

Сывă пултăр пирĕн аслă та хăватлă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пире çĕнтерӳсем тума хавхалантарса тата организацилесе пыракан большевиксен партийĕ!

Сывă пултăр халăхсен юратнă çулпуçĕ, Хĕрлĕ Çарăн гениллĕ полководецĕ, Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!

Краснодар крайĕнчи мĕнпур колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче сӳтсе-явса йышăннă.

ХАЛĂХА ÇУТТА КĂЛАРАС ЫЙТУПА ПУХĂННĂ КАНАШЛУ

Çак кунсенче Шупашкарта халăха çутта кăларас ыйтупа республикăри канашлу пулса иртрĕ. Канашлура районсемпе хуласенчи çутĕç пайĕсен заведующийĕсем тата шкулсенчи чи лайăх учительсем 156 çын пулчĕç. Канашлу СССР Совнаркомĕ 1944 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче «Шкулти вĕренÿ пахалăхне лайăхлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине мĕнле пурнăçласа пыни тата 1945—46 вĕренÿ çулĕнчи задачăсем çинчен сÿтсе-яврĕ.

— Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче,—терĕ Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташ хăйĕн докладĕнче,—эпир, пĕтĕмĕшпе илсен, пурне те хут вĕрентмелли сталинла закона пурнăçларăмăр. Шкула çÿреме тивĕçлĕ пĕтĕм ачасенчен 98,1 процентне вĕренĕве явăçтарнă. Калинино, Элĕк, Çĕрпÿ тата Вăрмар районĕсем пурне те хут вĕрентмелли закона чыслăн пурнăçларĕç. Анчах та чылай районсем çак закона пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлерĕç. Çавна пула Пăрачкав районĕнче 415 ача, Куславкка районĕнче 185 ача вĕренме çÿремен.

Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те шкула явăçтарас тĕлĕшпе иртнĕ çул шкулсене колхозсем пысăк пулăшу парса пычĕç. Вăрмар районĕнчи колхозниксем шкулсенче вĕри апат организацилеме 5.922 килограмм тырă пачĕç. Çак паха ĕçе Элĕк, Тăвай, Шăхасан, Елчĕк, Муркаш районĕсенчи колхозсем те активлăн туса пычĕç. Муркаш районĕнчи Тойкиятри çичĕ çул вĕренмелли шкула колхозниксем 44 центнер тырă, 83 центнер çĕрулми панă.

Кăçал пулса иртнĕ пĕлÿ тĕрĕслевĕсемпе экзаменсем иртнĕ вĕренÿ çулĕнче вĕренÿ пахалăхĕ чылай лайăхланнине кăтартса пачĕç.

Вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакансене çитĕнсе çитнине пĕлтерекен аттестат памалла туни ачасен вĕренес хастарлăхне нумай ÿстерчĕ. Кăçалхи экзаменсем Шупашкар хулинчи 10-мĕш класран вĕренсе тухакансем пысăк пĕлÿ илнине кăтартса пачĕç. Хулари 10-мĕш класра вĕреннĕ 94 ачаран 87-шĕ çитĕнсе çитнине пĕлтерекен аттестат илсе вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен 4-шĕ ылттăн медаль, 2-шĕ кĕмĕл медаль илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланасси 20 кун ытларах кăна юлчĕ. Анчах, çапла пулин те, республикăри шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне кирлĕ пек хатĕрленсе çитмен-ха. План тăрăх пурĕ 124.000 кубометр вутă хатĕрлемелле пулсан, ку тарана çитсе пурĕ те 62.523 кубометр кăна хатĕрленĕ. Çапла вара вутă хатĕрлес плана 50 процент кăна пурнăçланă. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Етĕрне, Комсомольски, Вăрнар районĕсем юлса пыраççĕ.

Шкулсене çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçре колхозсемпе промышленность предприятийĕсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Шупашкар хулинчи табак фабрики шкул тавра карта тытма 100 кубометр йывăç панă. Шкула кăмака туса тата вутă турттарса пулăшнă. Эрех завочĕ шкулта ĕçлеме çынсем уйăрнă. Пристань коллективĕ шкула йывăç тата тĕрлĕ краскăсем парса пулăшнă. Наркомфин работникĕсем хĕрачасен 2-мĕш номерлĕ шкулне 2.000 тенкĕ укçан панă тата хăйсен вăйĕпе 100 кубометр вутă хатĕрлесе панă. Сосновкăри çичĕ çул вĕренмелли шкулти 64 ачана заводри ОРС тăхăнмалли япаласем парса пулăшнă.

Красноармейски районри Калинин ячĕпе тăракан колхоз районри пĕтĕм колхозниксене шкула çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçре пулăшма чĕнсе каларĕ. Колхоз шкула 50 кубометр вутă, пĕр лав мăк турттарса панă. Шкулта ĕçлеме 2 кăмака тăвакан, 2 платник уйăрнă. Çак паха ĕçе ытти районсенче те тимлĕн туса пымалла.

Доклад тăрăх пренире пурĕ 24 çын тухса каларĕç.

Юлашкинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ.

Канашлу 1945—46 вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илес тĕлĕшпе республикăри пĕтĕм учительсемпе çутĕç работникĕсене чĕнсе каланине йышăнчĕ.

Чарыков юлташ канашлура каланă сăмахран

Совет халăхĕ гитлерла Германие çĕнтерни пирĕн çĕршыври ĕççыннисене творчествăллă ĕçлеме çав тери пысăк майсем туса пачĕ.

Пирĕн халăх нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра, мĕнпур Совет çĕршывĕпе пĕрлех, совет шкулĕ те питĕ йывăр тапхăра пурăнса ирттерчĕ. Фронтра çапăçса мухтава тухнă совет [illegible]

[illegible] эпир пурне те хут вĕрентес закона пурнăçа кĕртейменни пулать. Пурне те хут вĕрентес закона республикăри виçĕ район çеç пурнăçланă, ытти районсем шкул çулне çитнĕ пур ачасене те хут вĕрентмелли плана тултарайман. Вĕренÿ çулĕ тăршшĕнче нумай вĕренекенсем шкултан пăрахса кайнă. Пĕр 4-мĕш класран çеç 4 пин вĕренекене ахăр пăрахнă. Пăрачкав районĕнчи шкулсенчен 415 ача, Çĕмĕрле районĕнчи шкулсенчен 167 ача, Йĕпреç районĕнчи шкулсенчен 200 ача вĕренме пăрахнă.

Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те хут вĕрентмелли закона пурнăçлайманни тата ачасем шкултан пăрахса кайни Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн вырăнти органĕсем, çавăн пекех тата советпа парти органĕсем ачасене вĕренме пăрахмалла мар тăвас тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнманнинчен, ачасене шкулта йĕркеллĕ вĕрентме кирлĕ условисем туса паманнинчен килнĕ. Çак пысăк çитменлĕхе çитес вĕренÿ çулĕнче шута илмелле. Халĕ шкулсенче çитес çĕлре йĕркеллĕ ĕçлеме пур условисем те туса парас пулать. Уйрăмах тăлăх ачасене шкулта вĕренмелли условисем туса памалла.

Партипе правительство Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче шкул çинчен йышăннă постановленисем шкул пурнăçне тата вĕрентÿпе воспитани ĕçне тĕпренех улăштарчĕç.

Шкулсенчен вĕренсе тухмалли экзаменсем тата çитĕннине кăтартакан аттестат илмелли экзаменсем çак улшăнусене уйрăм учительсем тĕрĕс ăнланса хăйсен ĕçне тивĕçлипе улăштарнине, вĕрентÿ пахалăхне лайăхлатнине, вĕренекенсенчен хытăрах ыйтса вĕсен пĕлĕвне тĕрĕс хакланине, программа материалне вĕренекенсене çирĕп те тĕплĕн вĕрентме тăрăшнине кăтартса пачĕç.

Çакна Шупашкар хулинчи вăтам шкулсен Х-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисем те лайăх кăтартса параççĕ. Шупашкар хулинче вăтам шкулсен Х-мĕш класĕнче 94 ача вĕреннĕ, вĕсенчен 92-ĕшне çитĕннине кăтартакан аттестат илмелли экзаменсем тытма ирĕк панă. Вырăс чĕлхипе сочинени çырса пĕр хĕрача çеç экзамен парайман, 87 вĕренекен вăтам шкултан вĕренсе тухса çитĕннине

кăтартакан аттестат илнĕ. Вăл шутран 6 çын ылттăн тата кĕмĕл медальсем илнĕ. Вăтам шкултан вĕренсе тухакан вĕренекенсем вырăс чĕлхипе сочиненисем лайăх, хăйсем тĕллĕн тата литература чĕлхипе тĕрĕс çырнă. Шупашкар хулинчи Х-мĕш класран вĕренсе тухакансенчен нумайĕшĕ сочиненисене «Мой друг, отчизне посвятим души прекрасные порывы» темăпа [illegible]

[illegible] пурнăçăн ирĕклĕ те çутă çулĕ çине кĕрекенсем пурте çитĕнчĕç. Пире пуласлăх хăратмасть». Вăл фашистла захватчиксене хирĕç пынă кĕрешÿре халăх çак пурнăçа мĕнле хакла хÿтĕлесе хăварнине ăнланать. Вăл Ленин—Сталин партийĕ ертсе пыракан совет халăхĕ, аслă вырăс халăхĕ пуçпулса тăнипе, Октябрьти социализмлă революцире тунă аслă çĕнтерÿсене тăшманран сыхласа хăварнине тата малашне те сыхласа хăварассине ăнланать.

«Ирĕклĕхĕн хаваслăхне туйнă çынна, хăйĕн телейне пĕрер кирпĕчрен пухса купаласа тунă çынна—кам чура тума пултартăр? Паллах, вăл нихăçан та чура пулас çук». Сочинение вăл çапла сăмахсемпе пĕтерет: «Эпир шкултан вĕренсе тухатпăр. Пирĕн умра пурнăç çулĕ уçăлса тăрать, çав çулпа эпир хамăрăн социализмлă Тăван çĕршывшăн тăрăшма ĕçе тăрăпăр». Çак тĕслĕх те тата ытти нумай тĕслĕхсем те çакна кăтартса параççĕ: Тăван çĕршыва хÿтĕлекен фронтовиксем тата тылри ĕççыннисем хăйсен ачисен кунçулне пирĕн учительсене шанса парса йăнăш тумарĕç. Пирĕн учительсем çитĕнекен ăрăва Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин идейисене парса çитĕнтерчĕç.

Учитель вăл вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнчи тĕп вăй пулса тăрать. Ачасене вĕрентес тата воспитани парас ĕçĕн ăнăçлăхĕ учителĕн пĕлÿлĕхĕпе культурлăхĕнчен, унăн опычĕпе мастерлăхĕнчен, вăл мĕн тери тÿрĕ кăмăлпа ĕçленинчен тата вĕренекенсенчен хытă ыйтма пултарнинчен килет. Çакна пирĕн шкулсенче пулса иртнĕ экзаменсем те кăтартса пачĕç.

Анчах та аслăрах классене куçмалли экзаменсемпе тĕрĕслевсем тата вăтам шкултан вĕренсе тухмалли экзаменсем нумай шкулсемпе учительсен çитменлĕхĕсене те кăтартса пачĕç. Нумай вĕренекене иккĕмĕш çула хăварнă, темиçе пин ачан кĕркунне татах тепĕр хут тĕрĕслевре пулмалла, вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнче вĕреннĕ 300 çынна ытла экзаменсем тытма ирĕк паман. Республикипе те ылттăн тата кĕмĕл медальсем 9 çын çеç илнĕ.

Икĕ вăтам шкулăн Х-мĕш класĕнче вĕреннĕ 43 çынна Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе районри çутĕç пайĕн айăпне пула иккĕмĕш çул вĕренме хăварнине чăтма çук вара. Пирĕн шкулсенче вырăс чĕлхи вĕрентес ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла. Кăçал вырăс чĕлхипе вĕрентекен преподавательсен конференцине ирттермелле, çав конференцире вĕренекенсен пĕлÿлĕхне ÿстерес тĕлĕшпе тумалли мероприятисене сÿтсе-явмалла.

Вĕренекенсем хăйсем шкулта илнĕ пĕлÿпе практикăра усă курма пĕлменни те пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Улатăр районĕнчи Х-мĕш класра вĕреннĕ хăшпĕр вĕренекенсем 9-тан 1/3-мĕш пайне тупма пĕлмеççĕ, 100-тен 5 процент тупма пĕл[illegible]

[illegible] вĕренмелли шкула вĕренсе пĕтерни тесе свидетельство панă. Çав шкулта вĕреннĕ Михайловăн çулталăк тăршшĕнче 7 «единица», 5 «двойка», 3 «тройка» пулнă, экзаменра вăл «двойка» кăна илнĕ, çапах та ăна «тройка» паллăпа шкултан вĕрентсе кăларнă. Çакă ĕнтĕ вăл государствăна улталани пулмасть-и-ха? Кун пек улталăха тĕппипех пĕтермелле.

Çак çитменлĕхсем пурте шкулпа учителĕн ĕçне япăх контроллесе тăнинчен, педагогика кадрĕсемпе çителĕксĕр ĕçленинчен килеççĕ.

Шкулти вĕренÿпе воспитани ĕçне малалла лайăхлатас задача пĕр тĕп ыйтупа—шкулсем валли квалификациллĕ кадрсем çителĕклĕ таран тупса парас ыйтупа çыхăнса тăрать. Çакна шута илсе, Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе унăн вырăнти органĕсен шкулта ĕçлекен кадрсемпе ĕçлесси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Учитель пулма тивĕçлипе вĕренсе хатĕрленмен учительсем хăшпĕр чухне заочнăй йĕркепе вĕренме тăрăшмаççĕ, уйрăм учительсем вара, педагогика ĕçне вĕреннĕ пулин те, хăйсен ăсталăхне малалла ÿстерсе пырас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ, хăйсен ăс-тăнне совет наукин çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе пуянлатса пымаççĕ.

Шкулсемпе районсенче методика ĕçне государство хушнă пек организацилемелле, чи лайăх учительсен опытне пĕтĕçтерсе, учительсем хушшинче анлăн сарса пымалла. Учительсене методика пулăшăвĕ куллен парса пыма тивĕçлĕ учреждени—Учительсен ăсталăхне ÿстермелли Институт питех те çителĕксĕр ĕçлет. Вăл чи лайăх учительсемпе шкулсен опытне пĕтĕçтерсе пымасть, çамрăк учительсене методикăллă пулăшу парса тăмасть. Кунта педагогика ĕçĕнчи мастерсен опытне вĕренмеççĕ, ăна учительсем хушшинче сармаççĕ. Учительсен ăсталăхне ÿстермелли институт руководителĕсен вĕсен ĕçне çак канашлура критикленинчен тивĕçлĕ вывод тумалла, çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла.

Вĕренекенсен правилисене нумай шкулсенче çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Нумай шкул руководителĕсемпе учительсем вĕренекенсене культурăллăн тыткалама хăнăхтарас тĕлĕшпе куллен çине тăрса ĕçлесе пымаççĕ. Çавна пула пирĕн уйрăм шкулсенче дисциплина япăхса кайнă. Улатăр хулинчи шкулсенчен пĕлтĕрхи пуçламĕш çурçулта çичĕ ачана, вĕсенчен иккĕшне эрех ĕçсе ÿсĕрĕлсе çÿренĕшĕн, пĕрине йăлара пăсăлса кайнăшăн кăларса янă. Етĕрне районĕнче шкул правилисене пăснăшăн çак иртнĕ вĕренÿ çулĕнче 23 ачана шкултан кăларнă. Çакă ĕнтĕ вăл класпа шкул тулашĕнчи ĕçе питĕ çителĕксĕр йĕркеленине кăтартса парать. Шкулпа класс тулашĕнчи ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла. Класпа шкул тулашĕнчи ĕçе лайăхрах йĕркеленĕ пулсан, вĕрене[illegible]

[illegible] ĕçĕн пикесе пулса тăнине асра тытмалла. Кашни учитель ачасене пăхса çитĕнтерессишĕн партипе правительство умĕнче хăй ответлă пулса тăнине туйса тăрсан кăна, Наркомпроспа унăн вырăнти органĕсем шкулсене куллен пулăшса пырсан тата шкулпа учитель ĕçне педагогика тĕлĕшĕнчен чăннипех çирĕп контроль туса тăрсан кăна, пирĕн шкулсемпе учительсем хăйсен задачисене чыслăн пурнăçа кĕртме пултараççĕ. Наркомпросăн хăйĕн аппаратне тата районри çутĕç пайĕсен аппарачĕсене шкул ĕçне лайăх пĕлекен инспекторсем уйăрса лартса çирĕплетмелле.

Юлташсем! Этемлĕх ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн пынă улăпла кĕрешÿре совет шкулĕ пăхса çитĕнтернĕ çамрăксемпе учительсем хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнчĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕсем хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă кĕрешÿре геройсен ятне илсе чапа тухрĕç.

Мирлĕ строительство тапхăрĕнче пирĕн умма пысăк та ответлă задачăсем тухса тăраççĕ. Эпир çав аслă ответлăха туйса ĕçе тытăнатпăр. Совет учителĕсене партипе правительство çĕнĕ ăрăва, пирĕн çĕршыва вăрçă кунĕ çухатусене тÿрлетсе çитерме тивĕçлĕ ăрăва, хамăрăн государствăна хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен халиччен нихăçан пулман пек ÿстерсе чечеклентерме тивĕçлĕ ăрăва пăхса çитĕнтерес ĕçе шанса панă.

* * *

Юлташсем, ялхуçалăхĕнче хĕруллĕ ĕç вăхăчĕ çитрĕ—тырпула вăхăтра пухса кĕртмелле, авăн çапса государствăна тырă парса татмалла, кĕрхи тырăсене те лайăх акса хăвармалла. Çак ĕçсене туса ирттерме пире нумай вăй кирлĕ пулать. Тырпул пухса кĕртес ĕç—пĕтĕм халăх ĕçĕ. Пĕтĕм халăхăн çак ĕçĕнчен учительсем аякра тăрса юлма пултараймаççĕ. Пирĕн республикăра, пĕтĕм Совет Союзĕнчи пекех, учительсем ялхуçалăх ĕçĕсене активлăн хутшăнассĕ. Учительсем пирĕн колхозсене тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсене ăнăçлăн туса ирттерме пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Вĕсен колхоз уйхирĕнче хĕрсе ĕçлекенсем хушшинче агитаци ĕçне туса пымалла, хăйсен те уйхир ĕçĕсене хутшăнмалла.

Çĕнĕ вĕренÿ çулĕ çывхарса килет. Çак вĕренÿ çулĕ шкула—çĕнĕ ÿсĕм тума, вĕренекенсене—вĕренÿре çĕнĕ çитĕнÿсем тума май патăр.

Чÿречесем çĕмрĕк

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Албахтинăри 7 çул вĕренмелли шкул халĕ те çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленме тытăнман. Кăçал шкулта 9 класс пулмалла, вĕсенче пурĕ 250 ача вĕренмелле. Анчах та шкул çуртне юсаса хатĕрлес тĕлĕшпе кунта [illegible]ĕн те тумаççĕ. Шкулăн кантăкĕсем [illegible] куç ытла ваннă. Класри доскасемпе партăсене юсама тата сăрлама тытăнман, сĕтел-пукансем те çителĕксĕр. Шкул директорĕ Алексеева юлташ ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса пурăнать. Шкула «Партизан» тата «Сила» колхозри ачасем вĕренме çÿреççĕ. Ку колхозсенче кашнинчех партин пуçламĕш организацийĕсем пур, анчах та вĕсен секретарĕсем Осиповпа Павлов юлташсем шкул ĕçĕпе вуçех те интересленмеççĕ. Ял Совет председателĕ Иванова юлташ та шкул ĕçне тивĕçлипе ертсе пымасть.

М. ПЕТРОВ, С. ШАДИН.

Археологи экспедицийĕ

Иртнĕ кунсенче Чăвашсен чĕлхепе литературăн тата историн Наукăпа Тĕпчев Институтĕнчи Ученăй Советăн анлă ларăвĕ пулса иртрĕ. Ларура археологи экспедицин начальникĕ истори наукисен кандидачĕ О. А. Гракова юлташ «Абашри вилтăприне тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе археологи экспедицийĕ тунă ĕçсен итогĕсем çинчен» отчет туса пачĕ.

Вăл хăйĕн отчетĕнче вилтăприе чавнă чухне тупнă тĕрлĕрен япаласене: паха орнаментлă чÿлмексене, бронза çинче илемлетсе тунă хĕрарăмсен тĕрлĕ япалисене, ухăсене тата çĕр айĕнче сайра тĕл пулакан ытти япаласене кăтартса ăнлантарса пачĕ.

Ларура Чăвашсен Краеведчески Музей работникĕсемпе чăваш халăхĕн авалхи историйĕпе интересленекенсем те пулчĕç.

Дэвис Англие пыни

ЛОНДОН, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, августăн 4-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: Гарри Трумэн президентăн личнăй представителĕ тата Берлинри конференцин пĕрлешÿллĕ ларăвĕсенче пулнă американецсен 4 делегатĕнчен пĕри Джозеф Дэвис кĕске вăхăтлăха Англие пынă. Лондонра пулнă чухне Дэвис Америка посолĕпе Джон Вейнантпа канашласа илнĕ, çавăн пекех тата премьер-министрпа Клемент Эттлипе, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Эрнест Бевинпа, суту-илÿ министрĕпе Стаффорд Криппспа тата Англи правительствин ытти членĕсемпе те калаçнă.

Дэвис Лондона августăн 3-мĕшĕнче пынă та августăн 4-мĕшĕнче тухса кайнă. Дэвис малалла Париж урлă каять.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕМ НЕЙТРАЛЬНĂЙ ÇĔРШЫВСЕМПЕ АРГЕНТИНĂНА ÇĔР КĂМРĂКĔ ЯМА ЧАРĂННĂ

ЛОНДОН, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ панă хыпăр тăрăх, официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем нейтральнăй çĕршывсене тата Аргентинăна çĕр кăмрăкĕ яма вăхăтлăха чарăннă.

КОНГРЕСС ЫРЛАНĂ ЗАКОНСЕНЕ ТРУМЭН АЛĂ ПУСНИ

ВАШИНГТОН, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт пĕлтернĕ тăрăх, Трумэн президент нумаях пулмасть конгресс ырланă темиçе паха закона алă пуснă. Вĕсем хушшинче США Пĕрлешнĕ Нацисен организацине хутшăнасси пирки калакан, апат-çимĕçпе ялхуçалăхĕ çинчен калакан, экспортпа импорт банкĕн фончĕсене ÿстересси çинчен калакан, США пĕтĕм тĕнчери валюта тата аталанупа реконструкцин пĕтĕм тĕнчери банкне хутшăнасси çинчен калакан законсем пур. Халĕ, президент алă пуснă хыççăн, вăл законсем вăй илеççĕ.

ПОЛЬША ПРАВИТЕЛЬСТВИ АМНИСТИ ÇИНЧЕН КĂЛАРНĂ ДЕКРЕТ

ВАРШАВА, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Совечĕн 8-мĕш сессийĕ йышăннă решени тăрăх, Польша министрĕсен Совечĕ амнисти çинчен калакан декрет йышăннă. Çав декрета Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетне тунăранпа çулталăк тултарнă ятпа тата Польша Халăхĕн Пĕрлĕх Правительствине туса хунине чысласа кăларнă. [illegible] 1945 çулхи июлĕн 22-мĕшĕччен [illegible] ленисемшĕн айăпласкерсем, государствăна сыхласси çинчен калакан закона кăтартса панă çар тата общество сучĕсем суд тумаллискерсем; çавăн пекех тата амнисти ытти хăшпĕр ĕçсемпе финанс йĕркисене пăснă пирки айăпа кĕнĕ çынсене те пырса тивет. Анчах çав декретра кăтартса панă амнисти государствăна уйрăмах [illegible]

ИТАЛИН ВИÇĔ ПРОВИНЦИНЕ ИТАЛИ АДМИНИСТРАЦИЙĔН АЛЛИНЕ ПАНИ

РИМ, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Комиссийĕн Верховнăй Комиссарĕ Стоун адмирал çапла каланă: августăн 4-мĕшĕнче пуçласа Итали Эмилин, [illegible] тата Лукка провинцийĕсемпе Анкона общини Итали администрацийĕн аллине куçассĕ.

ГРЕЦИРИ ЛИБЕРАЛСЕН ПАРТИЙĔН ЛИДЕРĔ СОФУЛИС КАЛАНИ

АФИНЫ, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 2-мĕшĕнче либералсен партийĕ ертсе пыракансен канашлăвĕ пулса иртнĕ. [illegible] Софулис [illegible] «Грецире [illegible]», тенĕ. [illegible]

ТРИЕСТРИ ТАТА СЛОВЕНИ ПРИМОРЬЙĔНЧИ ЛАРУ-ТАРУ

БЕЛГРАД, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Борба» хаçачĕн корреспонденчĕ Триестран пĕлтернĕ тăрăх, Словени Приморьинчи Крайри халăх ирĕклĕхĕн комитечĕ, союзниксен Триестпа Словени Приморьинчи çар влаçĕсен ĕçĕсене хирĕçлесе, Англипе США правительствисене протест янă. Унта çакна асăрхаттарнă: июнĕн 26-мĕшĕпе июлĕн 19-мĕшĕнче массăллă демонстрацисем тата икĕ хутчен пĕрлешÿллĕ забастовка туса ирттерсе, край халăхĕ фа[illegible] демократиллĕ ирĕксене [illegible] сах ыйтнă.

Комитет Триестпа Словени Приморьинче 1943 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕччен пулнă фашистла законсене тепĕр хут пурнăçа кĕртмелле тунă решенисене пăрахăçа кăларма ыйтать. Çавăн пекех унта Триестпа Словени Приморьинчи управление организацилес ыйтусем тăрăх та чылай тăтăклă сĕнÿсем панă.

ФРАНКО ПРАВИТЕЛЬСТВИ БЕЛЬГИ ФАШИСЧĔСЕН ПУÇЛĂХНЕ ХÿТĔЛЕСЕ УСРАТЬ

БРЮССЕЛЬ, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Бельгири депутатсен палатин ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн августăн 2-мĕшĕнче пулнă ларăвĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Спаак çапла каланă: рексистсен (Бельги фашисчĕсен) пуçлăхне Леон Дегреле Бельги правительстви хăй аллине пама ыйтнине Испани правительстви сирсе янă. Испани правительстви ответленĕ тăрăх, Дегреле политикăллă преступленисемшĕн айăпланă пирки, ăна Бельги правительстви аллине пама май çук иккен. Темиçе кун каярах, тенĕ Спаак, Дегреле пама ыйтса иккĕмĕш хут çырса янă. Ку хутра ăна 1944 çулхи декабрь уйăхĕнче Арденра нимĕçсем контрнаступлени тунă вăхăтра уголовнăй преступленисем тунишĕн айăплаççĕ.

Петэна суд туни

ПАРИЖ, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Петэн судĕнче Пьер Лаваль свидетельрен ыйтнă. Тĕрлĕрен чееленсе, вăл пур майсемпе те Петэн политикине хÿтĕленĕ. Унăн хăйĕн те государство ĕçне сутнăшăн суд умне тăма лекнĕ пирки, Лаваль, Петэн ĕçĕпе свидетель пулнипе усă курса, хăйĕн сăмахĕнче Петэна çеç мар хÿтĕленĕ, вăл хăйне те хÿтĕлеме хăтланнă. Çавăн пирки те вăл Петэна тивекен ыйтусем çине ответлемесĕр, суд председателĕ Монжибо темиçе хут та асăрхаттарнине пăхмасăрах, хăйĕн «туламри политики» çинчен нумай каланă.

Çапах та Германи çĕнтертĕр тесе хăй уççăнах каласа панине унăн йышăнма лекнĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл оккупаци вăхăтĕнче усă курнă терминсемпе, Виши «правительствине» ертсе пынă чухнехи терминсемпе, усă курма хăтланнă. Сăмахран, Франципи де Голль ертсе пыракан вăйсене вăл «диссидентсем» тенĕ, союзниксем Çурçĕр Африкăра çарсем антарнине «агрессi» тесе ят панă.

Лавальтен ыйтнипе Петэн ĕçĕ тăрăх пыракан судăн 11-мĕш ларăвĕ вĕçленнĕ.

ПАРИЖ, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 4-мĕшĕнче Петэна суд тăвакан судра свидетель вырăнне илсе пынă Пьер Лавальтен ыйтнă. Ĕнер те, паян та Лаваль Петэн судне тÿрремĕнех тивекен ыйтусем çине ответ парассинчен пăрăнма хăтланнă, нумай пакăлтатса, вăл хăйĕн ĕçĕсене тÿрре кăларма тăрăшнă. Анчах вăл каланă сăмахсем вăл Тăван çĕршыва сутнине уççăнах кăтартса панă. Çапла вăл, намăса пĕлмесĕр, çакăн пек каланă: «йĕрке пултăр тесе, эпĕ Франци партизанĕсене хирĕç çапăçма кирлĕ тесе шутларăм, нимĕçсене хирĕç тăнă французсене террористсем вырăнне хурса айăплама хушрăм», тенĕ.

Лавальтен ыйтса пĕтернĕ хыççăн Петэн сучĕн 12-мĕш кунĕ пĕтнĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океан çинчи вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: иртнĕ çичĕ уйăх хушшинче Америка самолечĕсем Японин пĕтĕмĕшпе 2.545.000 тонна таякан суднисене пĕтерсе тăкнă е самаях вăйлă сиенленĕ, çавăн пекех тата 1.376 самолетне пĕтерсе тăкнă е вăйлă сиенленĕ.

Юлашки кунсем хушшинче Америка бомбардировщикĕсем Японин Формоза утравĕ çинчи тата Франци Индо-Китайĕнчи спабжени базисене сиенленĕ е вут тивертсе янă. Америкăн тинĕс авиацийĕн самолечĕсем японецсен Борнео утравĕ çинчи объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ВАШИНГТОН, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Лăпкă океан çинчи стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: августăн 2-мĕшĕнче американецсен Иводзима утравĕ çинчен вĕçсе улăхнă 130 истребителĕ японецсен Пагойăри тата Кобери аэродромĕсене тата ытти объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океан çинчи вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америка самолечĕсем Ява утравĕ çинчи Сурабайя тинĕс-çар базине тапăннă чухне японецсен 37 паровозне пĕтерсе тăкнă. Американецсен ытти самолечĕсем Малайя сыранĕсем çывăхĕнче Японин 7 грузовой суднине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Çавăн пекех тата союзниксен самолечĕсем Японин Хайнань, Борнео, Целебес тата Гальмагера утравĕсем çинчи объекчĕсене тапăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторă — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00192 Типография №1, Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 15.000